Чăваш археологине, чăваш халăхĕн этника историне, чăвашсемпе Вăтам Атăл тата Урал тăрăхĕнчи халăхсем хушшинчи этнокультура çыхăнăвĕсене тĕпченĕ Василий Филиппович Каховский ученый ячĕ республика тата çĕршыв тулашĕнче те паллă. Унăн наука ĕçĕ-хĕлĕ Чăваш Енри археологие тĕпчессипе пысăк тапхăра уçса парать, вăл чăваш халăхĕ мĕнле пулса кайнипе çыхăннă кăткăсран та кăткăс ыйтăва татса парас тĕлĕшпе питĕ нумай ĕçленĕ, учебниксемпе пособисем кăларнă, истори учителĕсем хатĕрлес ĕçе 40 çул ытла панă, вĕсем хушшинче вăл вĕрентнĕ, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вăй хуракан çынсем икĕ пине яхăн.

В.Ф. Каховский 1915 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче Атнаш ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Тăван ялти шкула пĕтерсен Шăхасанта вĕреннĕ. 1935 çулта Канашри педтехникумра вĕренĕве питĕ лайăх паллăсемпе вĕçленĕ. 1935-1936 вĕренӳ çулĕнче Çĕнĕ Чалкассинчи тулли мар вăтам шкулта математика вĕрентнĕ, тепĕр вĕренӳ çулĕнче Энтри ялĕнчи шкулта директор пулса ĕçлеме пуçланă. Унтан, пĕр вăхăтра харăс икĕ аслă шкулта – И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш пединституучĕн естествознани факультетĕнче тата Мускаври Н.Г. Чернышевский ячĕллĕ истори, философи тата литература институчĕн истори факультетĕнче вĕренсе тĕрлĕ енлĕ ятарлă пĕлӳсем илнĕ. Патшалăх экзаменĕсем Аслă Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенче иртнĕ. 1941 çулхи июль пуçламăшĕнче Хĕрлĕ çара илнĕ.

Вăрçă хыççăн 1946 çулхи февральте В.Ф.Каховский Шупашкара таврăннă, Чăваш патшалăх пединститутĕнче ассистент, унтан аслă преподаватель пулса ĕçлеме пуçланă, 1967 çулта вара историпе филологи факультечĕпе пĕрле И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне куçнă. Студентсене авалхи община историйĕпе, археологипе авалхи тĕнче историйĕпе, атеизмпа, Чăваш Ен историйĕпе тата ытти предметсемпе лекцисем вуланă, курс, диплом ĕçĕсене, аспирантсене, соискательсене ертсе пынă. Педагогика институтĕнче вăл нумай вăхăт истори факультечĕн деканĕ, истори кафедрин заведующийĕ, наука енĕпе проректор пулнă, çулталăк хушши пединститут ректорĕн ĕçĕсене туса пынă, унтан виçĕ çул Чăваш АССР çут ĕç министрĕ пулса ĕçленĕ. Университета куçсан историпе филологи факультечĕн деканĕ, пĕтĕмĕшле историпе археологи кафедрин пуçлăхĕ пулнă.

В.Ф. Каховский принциплă ученăй, çирĕп ыйтакан педагок, çав вăхăтрах питĕ ырă чунлă çын. Студентсем, аспирантсем, ĕçтешсем ăна яланах лăпкă, кирек мĕнле лару-тăрура та кăмăллă курма хăнăхнă. Никам та вăл хăçан та пулин сассине хăпартнине астумасть.

Унăн наука ĕçĕн малтанхи çулĕсем Авалхи Рим историйĕн ыйтăвĕсене тишкерессипе çыхăннă. 1951 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче Мускаври М.В. Ломоносов ячĕллĕ патшалăх университетĕнче С.Л. Утченко профессор ертсе пынипе вăл «Рим республикин кризисĕ тапхăрĕнчи çĕр ĕç юхăмĕ» темăпа кандидат диссертацине ăнăçлă хӳтĕленĕ.

В.Ф. Каховский Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн тата СССР Наукăсен академийĕн археологи институчĕн экспедицийĕсене ертсе пынă. Вăл Чăваш Республикин тата Тутарстан çĕĕсенче вуншар улăп тăпри, авалхи масар, ял, хула вырăнĕсене тата ыттисене те чавса тĕпченĕ, ун çинчен çыра-çыра кăтартнă. Çак тата ытти материалсемпе, кĕнекесемпе, ал çырăвĕсемпе усă курса «Памятники материальной культуры Чувашской АССР» (1957), «Памятные историко-революционные места в

Чувашии»(1960), «Памятники истории и культуры Чувашской АССР» (1969) монографисем кăларнă.







В. Ф. Каховский тĕрлĕрен вĕрентӳпе методика пособийĕн авторĕ те:вĕренекенсем валли историпе пособисем çырнă, вĕсем 4-5-шер хут пичетленсе тухнă. С.Н. Ахмеевпа тата Л.А. Ивановпа пĕрле пирĕн ентеш «Чебоксарский хлопчатобумажный комбинат» монографи (1979) кăларнă. В.Ф. Каховский пĕтĕмпе 140 ытла кĕнеке, брошюра, монографи, тĕпчев статйисем çырнă.

В.Ф.Каховский 1989 çултанпа Чăваш Республикин Министрсен совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн археологи пайне ертсе пынă. Унăн ĕçлес, çырас кăмăлĕ питĕ пысăк пулнă. Анчах та 1993 çулхи августăн 24-мĕшĕнче вăл сарăмсăр вилсе кайнă.

В. Ф. Каховский истори наукинче ĕмĕрлĕхе юлчĕ. Ăна 1976 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ наука ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă, Чăваш Республикин Академийĕн хисеплĕ членĕ тата Чăваш наци академийĕн чăн членĕ пулнă.

***Информационно-библиографический отдел***

***центральной районной библиотеки***

***Тел. 49-7-00***
***e-mail: library-shihazan@ya.ru***

МБУК «ЦБС» Канашского района
Информационно-библиографический отдел

## «Чăваш Ен палли археологи тĕпчевçи»

# Каховский Василий Филиппович



(90 лет со дня рождения)

**с. Шихазаны-2020**